28-мӗш çул тухать. Хакӗ 20 пус.

1945 СЕНТЯБРЬ 23 ВЫРСАРНИКУН 185(6936) №

ЧӐВАШ КОММУНИ

Пӗтӗм тӗнчери пролетарисем, пӗрлешӗр!

ВКП(б) Обкомӗпе Шупашкар хула комитечӗ, ЧАССР Верховнӑй Совечӗ тата Шупашкар хула Совечӗн хаçачӗ

Республика государство умӗнче пысӑк парӑмлӑ

Отечественнӑй вӑрçӑн тӑватӑ çулӗ хушшинче пирӗн республика государство умӗнчи хӑйӗн обязательствисене татӑшах чыслӑн пурнӑçа кӗртсе пычӗ. Халӗ эпир мирлӗ пурнӑçпа пурӑнатпӑр. Демобилизаци законӗ тӑрӑх çартан вӑйпитти арçынсем яла чылай таврӑнчӗç. Нумай лашасемпе автомашинӑсем тӳрремӗнех вӑрçӑ заказӗсене пурнӑçлассинчен хӑтӑлчӗç. Çапла вара колхозлӑ ялӑн вӑйӗ палӑрмаллах хутшӑнчӗ. Анчах пирӗн республика кӑçалхи çул тырпул пухса кӗртес задачӑсене, чи малтан çӗршыв умӗнчи пӗрремӗш тивӗçе — государствӑна тырӑ парас задачӑна пурнӑçлас тӗлӗшпе иртнӗ çулсенчинчен нумай кая юлса пырать.

Хӑшпӗр районсемпе колхозсен руководителӗсем çакӑн пек япӑх лару-тӑрӑва кӑçал çанталӑк йӗпе-çапаллӑ тӑнипе ӑнлантарса пама пӑхаççӗ. Ку вӑл пачах та тӗрӗс мар. Йӗпе-çапаллӑ çулсем вӑрçӑ вӑхӑтӗнче те пулнӑ. Анчах ун чухне никамӑн та тӗрлӗ сӑлтавсем шыраса ларма хӑюлӑх çитеймен.

Республика кӑçалхи çул государствӑна тырӑ парас ӗçре кая юлса пыни, пуринчен малтан, хӑшпӗр районсемпе колхозсен руководителӗсем демобилизациллӗ шухӑш-кӑмӑла парӑннинчен килет. Уйрӑм руководительсем, тӳрех каламаççӗ пулсан та, çапла шухӑшлаççӗ: «Вӑрçӑ вӑхӑтӗнче тырпул çӗршыва боеприпас пекех кирлӗ пулнӑ, халӗ вӑрçӑ пӗтнӗ, васкамасан та юрать», теççӗ. Вӗсем пирӗн çӗршыв умне халӗ, мирлӗ вӑхӑтра, мӗн тери пысӑк ӗç тухса тӑнине, нимӗç оккупанчӗсем аркатса хӑварнӑ халӑх хуçалӑхне хӑвӑртрах юсаса ура çине тӑратас, Тӑван çӗршывӑн экономика хӑватне татах та ытларах тӗреклетес ӗç тухса тӑнине манса каяççӗ.

Партипе правительство кӑçал пулма пултарас йӗпе-çапаран сыхланма кирли çинчен нумай малтан асӑрхаттарнӑ. Çавна шута илсе, малта пыракан районсенчи колхозсем (Вӑрнар, Сӗнтӗр т. ыт.) кирек мӗнле çанталӑкра та авӑн çапма май паракан витнӗ итемсене, авӑнсене, сушилкӑсене хӗрӳ ӗç пуçланиччен чылай малтан туса лартнӑ. Вӗсем пӗтӗм ӗçе, партипе правительство кӑтартнӑ пек, тӗрӗс организациленӗ. Тӑрӑшни нихçан та сая каймасть. Çав районсенчи колхозсем государство умӗнчи парӑма чыслӑн татса параççӗ. Вӗсем çӗршывран ырӑ сӑмах кӑна илтме тивӗçлӗ.

Анчах пӗр республикӑрах вырнаçса тӑракан Элӗк, Канаш, Шӑмӑршӑ, Тӑвай, Çӗмӗрле, Хӗрлӗ Чутай районӗсенче çумӑр уйрӑмӑнах нумай çӑвать-шим вара? Мӗншӗн вӗсем государствӑна тырӑ памалли пилӗккунлӑх графикӗ пӗрре те тултарса пымаççӗ? Сӑмахран, Элӗк районӗ сентябрӗн 10-мӗшӗпе 15-мӗшӗ хушшинчи графика та тултарман, юлашки пилӗккунлӑхра вара унччченхинчен те сахалтарах тырӑ панӑ. Пӗлтӗр çак вӑхӑт тӗлне паянпе танлаштарсан, кӑçал вӑл государствӑна тырӑ 56.385 пӑт сахалтарах панӑ. Улатӑр районӗ унччченхи пилӗккунлӑхра 264 тонна панӑ пулсан, çак иртнӗ пилӗккунлӑхра 104 тонна çеç панӑ.

Вӑтам хисепре пыракан Калинино, Красноармейски, Сӗнтӗрвӑрри районӗсем те иртнӗ пилӗккунлӑхра тырӑ парас ӗçӗн хӑвӑртлӑхне çуррине яхӑн чакарса янӑ. Сӗнтӗрвӑрри районӗ иртнӗ пилӗккунлӑхра иккӗмӗш вырӑнтан тӑваттӑмӗш вырӑна анса ларнӑ. Чкаловски район сентябрӗн 10-мӗшӗпе 15-мӗшӗ хушшинче 611 тонна тырӑ панӑ пулсан, иртнӗ пилӗккунлӑхра 315 тонна çеç панӑ.

Асӑннӑ районсен руководителӗсем, парти райкомӗсен секретарӗсемпе райсовет исполкомӗсен председателӗсем, пирӗн республика срокчен государствӑна тырӑ парса татас тӗлӗшпе пӗтӗм Тӑван çӗршыв умӗнче панӑ обязательство çинчен манса кайнӑ. Вӗсем çак ӗçе чӑн-чӑн большевикла организацилемен.

Акӑ Çӗмӗрле районӗнчи хӑшпӗр тӗслӗхсене илсе пӑхар. Сентябрӗн 15-мӗшӗ тӗлне вӑл тырӑ памалли плана 27.2 процент, сентябрӗн 20-мӗшӗ тӗлне вара 34 процент чухлӗ тултарнӑ, çапла вӑл 6 процент ытларах ӳсем тунӑ. Кунти Заготзерно склачӗ умӗнче тырӑ пама пынӑ лавсем çукпа пӗрех. Сентябрӗн 17-мӗшӗнче районри 7 колхоз пурӗ 43.8 центнер, 18-мӗшӗнче—5 колхоз 37.2 центнер, 19-мӗшӗнче 5 колхоз — 44.6 центнер тырӑ панӑ. Çакӑн пек «хӑвӑртлӑхпа» ӗçлесен, Çӗмӗрле районӗ государство умӗнчи парӑма кӑçалах парса татас çук. Çакӑн пек районсем хӑйсем кая юлса пынипе пӗтӗм республикӑна каялла туртаççӗ, ӑна пӗтӗм çӗршыв умӗнче намӑса кӑлараççӗ.

Муркаш районне республикӑри хаçатсенче хытӑ критикленӗччӗ. Анчах кунта та лару-тӑру улшӑнни курӑнмасть-ха. Вӑл ниепле те графика кӗреймест. Иртнӗ пилӗккунлӑхра вӑл унччченхинчен те сахалтарах тырӑ панӑ. Çак районри Панкли ял Советне кӗрекен «Зерно» колхоз (председателӗ Петров юлташ) государствӑна тырӑ памалли плана 25 процент кӑна тултарнӑ. Кунта кӗлте типӗтме авӑнсем çук, çавӑнпа авӑна типӗ чухне тата кӑнтӑрла кӑна çапаççӗ. Ку колхозран 3—4 çухрӑмра, Шӗвӗш ялӗнче, тырӑ памалли вӑхӑтлӑх пункт уçса панӑ. Анчах колхозсем çакӑнпа та усӑ курмаççӗ. Тивӗш ял Советӗнчи Кутузов ячӗпе тӑракан тата «Тиуши» колхозсенче те çавӑн пекех япӑх ӗçлеççӗ. Çак асӑннӑ ял Совечӗсенче парти райкомӗпе райисполком уполномоченнӑйсем пулса ӗçлекен Касьяновпа Астрова юлташсем, государствӑна тырӑ парас ӗçе организацилес вырӑнне, «условисем çук» тесе калаçса лараççӗ. «Тиуши» колхозра тырӑ та вырса пӗтермен. Кун пек тӗслӗхсене Муркаш районӗнчи нумай колхозсенче тӗл пулма пулать.

Государствӑна тырӑ парас ӗçре республика кая юлса пынине пӗтермелле. Çавна тӑвас тесен, малта пыракан районсен хӑйсен ӗç хӑвӑртлӑхне малалла вӑйлатса пынипе пӗрлех, кая юлнӑ районсен хӑйсен ӗçне тӗпренех улӑштармалла. Авӑн çапса государствӑна тырӑ парас ӗçе чӑн-чӑн большевикла организацилемелле. Лайӑх çанталӑк пулассине халӗ тин кӗтсе лармалли çук. Хура кӗре кӗрсе пынӑ май çанталӑк ытларах та пӑсӑлса кайма пултарать. Апла пулсан, пӗтӗм ӗçе çавна шута илсе йӗркелес пулать. Авӑнсене талӑкӗ-талӑкӗпех ӗçлеттерсе кӗлте типӗтмелле. Авӑнсем çитеймесӗр е пачах та çук çӗрте халех çӗнӗрен туса лартас пулать. Мӗнпур молотилкӑсене витнӗ итемсем айне вырнаçтарса, талӑкӗ-талӑкӗпех авӑн çапмалла. Тырӑ турттаракан транспорт бригадисене ытти ӗçсенчен пушанакан лашасемпе çынсене хушса парас пулать. Вӗсене урӑх ӗçе турткалама чармалла. Вӗсем хушшинче социализмлӑ ӑмӑрту анлӑн сармалла.

Паян, сентябрӗн 23-мӗшӗнче, пӗтӗм республикипе государствӑна тырӑ леçсе памалли воскресник пулса иртет. Паянхи кун государствӑна тырӑ турттарма колхозсен вӑйне çеç мар, предприятисемпе учрежденисен тата организацисен транспортне, район центрӗсемпе хуласенчи мӗнпур автомашинӑсене мобилизацилес пулать. Çак воскресникра илнӗ хӑвӑртлӑхла малашне те чакармалла мар. Тырӑ парас ӗçе кунран-кун вӑйлатса пымалла.

Çапла пӗтӗм ӗçе большевикла организацилесе, республикӑн государство умӗнчи пысӑк парӑмне татар, партипе правительство умӗнче панӑ хамӑр сӑмаха чыслӑн пурнӑçлар, орденлӑ республикӑн вӑрçӑ вӑхӑтӗнче çирӗп тытса пынӑ чысне халӗ, мирлӗ вӑхӑтра, пӗтерер мар, совет çӗршывӗн вӑй-хӑватне татах та ытларах тӗреклетес ӗмӗтпе ӗçлесе, государствӑна тырпул срокчен парса татар! Çак хисеплӗ те ответлӑ задачӑна пурнӑçлама пирӗн пур майсем те çителӗклӗ.

Государствӑна тырӑ памалли графика кашни район, кашни колхоз тултарса пытӑр!

Пӗр кунта 256 тонна тырӑ

ÇӖРПӲ, сентябрӗн 22-мӗшӗ. (Телефонпа). Паянхи куна районри 12 колхоз государствӑна тырӑ памалли плана тултарчӗç. Вӗсен шутне «Луч», «Балтиец», «Красный бригадир», «Правда», «Ӗмӗт», «Глиссер», «Сталинец», «Победа», «Дружба», «Серп», «Красный герой» тата Буденный ячӗпе тӑракан колхозсем кӗреççӗ.

Анчах та районри чылай колхозсенче государствӑна тырӑ парасси çителӗксӗр пырать-ха. Ыранхи воскресника колхозсем лайӑх хатӗрленсе кӗтсе илеççӗ. Кашни колхозрах тырӑ леçес ӗçе мобилизацилеме май пур лашасене явăçтаратпӑр. Колхозсенчен пӗлтернӗ тӑрӑх, районӗпе пурӗ 256 тонна тырӑ государствӑна леçме май пур. Çакӑн чухлӗ тырра эпир леçетпӗрех.

Сентябрӗн 21-мӗшӗнче районра икӗ тӗлте (подрайонсенче) колхозсемпе ял Совет председателӗсен, колхоз счетоводчӗсен тата пуçламӗш парторганизаци секретарӗсен канашлӑвӗсене туса ирттертӗмӗр. Çак канашлусенче воскресника мӗнле ирттерессине сӳтсе-явнӑ. Кашни колхозрах мӗн чухлӗ тырӑ леçмеллине пӗлеççӗ. Хӗрлӗ обозсене нумай колхозсенче коммунистсемпе комсомолецсем ертсе пыраççӗ.

Пирӗн районри колхозсем сентябрӗн 21-мӗшӗ тӗлне тӗштырӑсене вырса пӗтерчӗç. Халӗ капан хывса авӑн çапас ӗç хӗрӳллӗ пырать. Иваново ял Советӗнчи «Луч» колхоз (председателӗ Николаев юлташ) сентябрӗн 14-мӗшӗ тӗлнех авӑн çапса пӗтерчӗ. «Красный Перекоп» колхоз (председателӗ Павлов юлташ), «Красный бригадир» колхоз (председателӗ Ферапонтов юлташ) авӑн çапса пӗтерчӗç.

Чылай колхозсем çӗрулми кӑларма тытӑнчӗç. «Ӗмӗт» колхоз сентябрӗн 13-мӗшӗнче çӗрулми кӑларма тытӑнчӗ. Колхоз паян-ыран государствӑна çӗрулми те парса татать.

Тырпула вырса пухас тӗлӗшпе Чӑваш АССР Çӗрӗç Халӑх Комиссариачӗн пирӗн районри селекци станцийӗ юлса пырать. Унӑн паянхи кун тӗлне вырман тырри 200 гектар шутланать. Çак хуçалӑха пулӑшас шутпа вырсарникун районри предприятисемпе учрежденисенчи рабочисемпе служащисем тырӑ вырма каяççӗ. Çавӑн пекех çак хуçалӑха кӳршӗри колхозсем те çынсем тата туртӑм вӑйӗ ярса пулӑшаççӗ.

Д. МИТЬКОВ.
ВКП(б) райкомӗн секретарӗ.

Государствӑна тырӑ памалли плана октябрӗн 1-мӗшӗ тӗлне тултарассишӗн

КӲКЕÇ, сентябрӗн 22-мӗшӗ. (Телефонпа). Районри «Память Ленина», «Зерно», «Правда», «Вторая пятилетка», «Красный флот», «Заря», «Осоавиахим» колхозсем, пурӗ 12 колхоз, государствӑна тырӑ памалли плана пӗтӗмпех тултарчӗç. Колхозсенче капан хывас, авӑн çапас ӗç ӑнӑçлӑн пырать. Çак вара государствӑна татти-сыпписӗр тырӑ ярса тӑма май парать. Колхозниксемпе колхозницӑсем кунне-çӗрне пӗлмесӗр авӑн çапса государствӑна тырӑ параççӗ.

Çак кунсенче ВКП(б) райкомӗн пленумӗ пулса иртрӗ. Пленумра районри парти активӗ, çавӑн пекех пуçламӗш парторганизацисен секретарӗсем те пулчӗç. Пленум государствӑна тырӑ парас тӗлӗшпе район хӑй çине илнӗ обязательствӑна пурнӑçлассишӗн мӗнле кӗрешнине тата мӗнле пурнӑçласа пынине сӳтсе-яврӗ. Пленумра пулнисем пӗр кӑмӑллӑ пулса государствӑна тырӑ памалли обязательствӑсене октябрӗн 1-мӗшӗ тӗлне пӗтӗмпех тултарассишӗн пӗтӗм вӑя хурса кӗрешме пулчӗç. Районри колхозниксемпе колхозницӑсем çак решение ырлаççӗ. Тӗштырӑсене вырса пӗтернӗ хыççӑн капан хывасси, авӑн çапса государствӑна тырӑ парасси палӑрмаллах хӑвӑртланчӗ.

Ыранхи массӑллӑ воскресника районри мӗнпур колхозсем хутшӑнаççӗ. Воскресника хатӗрленсе ирттерес ӗçе колхоз председателӗсемпе пуçламӗш парторганизаци секретарӗсене пулӑшас шутпа район центрӗнчи парти тата совет активне ятӑмӑр. Воскресникра районӗпе 400 тонна тырӑ леçме май пур. Çакна пурнӑçлассишӗн пӗтӗм вӑя хурса ӗçлӗпӗр.

В. КАРАУШЕВ.
ВКП(б) райкомӗн секретарӗ.

Воскресника пурте хатӗрленеççӗ

ИШЛЕЙ. Государствӑна тырӑ памалли графика тултаракан колхозсен йышӗ ӳссе пырать. Районри актив, колхозсене кайса, воскресник çинчен тӗплӗн ӑнлантарса пачӗ. Районри колхозсем тӗштырӑсене вырса пӗтерчӗç. Халӗ кӗлте турттарас тата авӑн çапас ӗç хӗрӳллӗ пырать.

Çӗньял Покровски ял Советӗнчи «Красная горка» колхозра Савельевпа Скворцов колхозниксем хӑйсен ӗнисемпе кӗлте турттараççӗ. Колхозра авӑн çапас хӑвӑртлӑх ӳсрӗ, колхоз государствӑна тырӑ памалли графика тултарать. Ку ял Советӗнчи «Красный Октябрь», «Хозандай» колхозсем те графика тултараççӗ.

Воскресникра хатӗрлев пунктне районӗпе 200 тоннӑран кая мар тырӑ леçеççӗ. «Самолет» колхоз тырӑ памалли çулталӑкри плана тултарчӗ. «Дружба», «Красный Яуш», «Путь Ильича», «Гвардия», «Верный путь», Андреев ячӗпе тӑракан тата ытти колхозсем, пурӗ 30 колхоз, государствӑна тырӑ памалли плана октябрӗн 1-мӗшӗ тӗлне пурнӑçлассишӗн кӗрешеççӗ. Районра воскресника пур колхозсем те хутшӑнаççӗ.

РЕСПУБЛИКӐРИ КОЛХОЗСЕНЧЕ ТЫРПУЛ ПУХСА КӖРТЕС ӖÇ СЕНТЯБРӖН 20-МӖШӖ ТӖЛНЕ МӖНЛЕ ПЫНИНЕ КӐТАРТАКАН
СВОДКА
(процентпа)

РАЙОНСЕМ	Капан хывнӑ	Авӑн çапнӑ	Çӗрулми кӑларнӑ	Курӑк вӑрлӑхӗ пухнӑ
Улатӑр	72,0	49,7	—	—
Элӗк	75.3	49.0	3.4	38.1
Вӑрнар	73.6	54.5	25.5	27.4
Йӗпреç	65.8	52.8	—	22.2
Ишлей	68.7	56.8	3.4	55.1
Калинино	79.0	51.8	10.5	22.0
Канаш	61.7	54.1	5.9	15.0
Куславкка	67.1	55.6	0.2	69.0
Комсомольски	65.2	48.2	0.5	35.6
Красноармейски	73.8	55.8	3.8	52.5
Хӗрлӗ Чутай	71.8	47.5	8.7	42.2
Кувакино	65.6	52.7	—	60.7
Сӗнтӗрвӑрри	70.8	53.3	3.4	16.5
Муркаш	54.5	41.3	—	23.4
Октябрьски	78.6	61.2	—	20.6
Первомайски	68.8	47.7	18.4	24.3
Пӑрачкав	58.6	43.1	—	17.0
Советски	68.7	48.0	11.6	33.8
Сӗнтӗр	64.6	50.8	4.0	50.9
Вӑрмар	59.2	47.5	6.3	27.4
Çӗрпӳ	66.8	52.3	7.2	94.1
Шупашкар	73.7	61.4	9.9	78.8
Чкаловски	73.5	41.1	4.0	46.0
Чурачӑк	77.4	49.9	5.1	58.3
Шӑмӑршӑ	78.6	61.7	21.8	76.9
Шӑхасан	78.5	53.3	9.5	51.0
Çӗмӗрле	63.6	44.3	—	17.5
Етӗрне	76.7	42.4	7.3	85.5
Елчӗк	68.2	44.8	21.5	88.1
Тӑвай	56.6	51.4	4.3	30.0

РЕСПУБЛИКӐРИ КОЛХОЗСЕНЧЕ КӖРХИ СӖРТМЕ ТАВАС ӖÇ СЕНТЯБРӖН 20-МӖШӖ ТӖЛНЕ МӖНЛЕ ПЫНИНЕ КӐТАРТАКАН
СВОДКА
(процентпа)

Районсем	Кӗрхи сӗртме тунӑ
Çӗрпӳ	39.1
Сӗнтӗр	36.5
Чурачӑк	29.5
Шупашкар	27.8
Красноармейски	25.1
Октябрьски	24.7
Сӗнтӗрвӑрри	24.3
Елчӗк	23.8
Етӗрне	21.9
Шӑхасан	21.9
Калинино	20.3
Вӑрнар	19.9
Ишлей	19.8
Вӑрмар	14.9
Куславкка	14.3
Чкаловски	13.5
Первомайски	11.7
Советски	11.2
Элӗк	10.8
Çӗмӗрле	10.2
Комсомольски	9.8
Муркаш	8.5
Тӑвай	7.2
Шӑмӑршӑ	6.9
Йӗпреç	6.8
Улатӑр	6.7
Канаш	5.9
Хӗрлӗ Чутай	5.0
Пӑрачкав	3.6
Кувакино	1.1

Государство укçине пӗр пус тӑкакламасӑр

ВӐРНАР. (Хамӑр корр.). Хусан чугун çулӗн Вӑрнар станцийӗнче ӗçлекенсем станци хӗллехи вӑхӑтра йӗркеллӗ ӗçлесе пытӑр тесе, мӗн кирлине пурне те турӗç. Чи малтанах ку тӗлӗшпе иртнӗ çулсенче пулнӑ йӑнӑшсемпе çитменлӗхсене шута илсе, вӗсене вӑхӑтра пӗтерсе пынӑ. Çавӑн пекех, вӑхӑт кӗр енне каясса пӑхмасӑр, станцие çуллах хӗллехи вӑхӑтра пӗр тикӗс ӗçлемелле хатӗрлесе çитернӗ. Движенин 2-мӗш отделенинчен килсе тӗрӗслесе Вӑрнар станцийӗ хӗллехи вӑхӑтра ӗçлеме хатӗррине палӑртнӑ.

Паянхи куна кунта станци çуртне (вокзала), пассажирсем кӗтсе лармалли пӳлӗме, буфетпа кухньӑна, тавар кантурне, станци начальникӗпе дежурнӑйсен пӳлӗмӗсене т. ыт. те пурне те юсанӑ, шуратса тата сӑрласа тухнӑ, ванчӑк чӳречесене кантӑксем лартнӑ, алӑксене пӗтӗмпех тӳрлетнӗ. Çавӑнпа пӗр вӑхӑтрах 6 кӑмака юсанӑ, шыв вӗретмелли будкӑна тӗпрен юсаса çӗнетнӗ, икӗ будкӑна юсаса сӑрланӑ т. ыт. те. Стрелкӑсемпе унти инвентарьсене пурне те юсанӑ тата кирлӗ чухлӗ хатӗрленӗ.

Чугун çула юсаса хатӗрлес тӗлӗшпе путеецсем, пӗтӗмӗшпе илсен хӑйсемех ӗçлерӗç. Анчах канмалли кунсенче движенецсемпе станцинчи ытти работниксем те 11 хутчен тухса вӗсене пулӑшрӗç. Çапла вӗсем 812 сехет ӗçлесе, 450 метр тӑршшӗ çул юсанӑ, 36 шпал улӑштарса хунӑ. Кунсӑр пуçне, Молотов ячӗпе тӑракан, «Майӑн 1-мӗшӗ», «Колхозница» колхоз членӗсем хутшӑнса ӗçлерӗç.

Çак ӗçсене Вӑрнар станцийӗн работникӗсем государство укçине пӗр пус тӑкакламасӑр хӑйсен вӑйӗпе тунӑ. Станцие хӗле хатӗрлес ӗçсене ЧАССР Верховнӑй Совет Президиумӗн Хисеплӗ Грамотине илнӗ старши стрелочник Я. Попов юлташ пуçарса ертсе пычӗ. Нумайӗшне вӑл хӑй тунӑ. Попов юлташ икӗ стрелочнӑй будкӑна юсаса сӑрланӑ. Пӗрремӗш постри будка тавра штакетник туса унта 50 тӗп акаци лартнӑ, стрелочнӑй указательсене юсанӑ хыççӑн çуртсемпе кӑмакасене пурне те сӑрланӑ. Кирлӗ материалсене пурне те вӑл вырӑнтах шыраса тупнӑ.

Çавӑн пекех станцие хӗле хатӗрлес ӗçре станци дежурнӑйӗ Г. Медведев, грузчиксен бригади бригадирӗ Д. Плешивцев, грузчик Е. Воровков, старши стрелочниксем Г. Деманинпа О. Осит, весовщица А. Кухарева, уборщица К. Фофанова юлташсем тӑрӑшса ӗçлерӗç.

Ӳкерчӗк çинче: пирӗн чаплӑ земляк — Çарпа Транспорт Академийӗн начальникӗ генерал-лейтенант **В. М. Филичкин.**

Совет Союзӗн Геройӗ Алексей Воробьев

Ирӗклӗ Тӑван çӗршывшӑн çапӑçса, сахал мар паттӑрсем ӗмӗр манми чапа тухрӗç.

Акӑ пирӗн умра типшемрех те илемлӗ сӑн-питлӗ йӗкӗт Алексей Иванович Воробьев. Вӑл ытти çынсенчен нимӗнпе те уйӑрӑлса тӑмасть пек туйӑнать. Анчах унӑн вӑрçӑри паттӑрла ӗçӗсем вӑл чӑн-чӑн герой иккенне кӑтартса параççӗ.

Алексей Иванович Воробьев 1915 çулта Муркаш районӗнчи Çурла Тӑрри ялӗнче, вӑтам хресчен семьинче çуралнӑ. Ашшӗнчен 6 çулта тӑлӑха юлнӑ.

— Çамрӑклӑх манӑн ырах пулман, çемьере эпӗ чи асли пулнӑ пирки пӗтӗм йывӑрлӑха хамах чӑтса ирттермелле пулнӑ,—тет Алексей Воробьев.

1941 çулхи август уйӑхӗнче, нимӗç фашисчӗсем Тӑван çӗршыва шалалла тапӑнса килнӗ вӑхӑтра, Алексей Воробьев фронта тухса каять.

— Ывӑлӑм, тискер тӑшманпа патваррӑн çапӑç, каялла çаврӑнса çитме ыр кунçул пултӑр сана,—тесе пехилленӗ ӑна ватӑ амӑшӗ Агафья Ивановна.

Алексей Воробьев вӑрçӑра тӑватӑ çул хушши çапӑçнӑ. Унӑн вӑрçӑ хирӗнчи паттӑрла ӗçӗсене нумай çырса кӑтартма пулать. Вӑл яланах саперсен разведкинче çӳренӗ. Артиллерипе пехотӑна малалла кайма çул уçса парас ӗçе вӑл хӑйӗн пӗтӗм пултарулӑхӗпе хӑюлӑхне панӑ. Темиçе хутчен нимӗçсен тылӗнче пулнӑ. Тӑшманӑн тылне 18 километра яхӑн кӗрсе кайнисем те пулкаланӑ.

Тӗттӗм çӗр... Куçран тӗртсен те нимӗн курӑнман. Ирсӗр нимӗçсем Украина çӗрӗнче мӗн ӑспе килнине хӑтланнӑ. Çамрӑк хӗрачасене пусмӑрланӑ, вӗлернӗ. Калама çук тискер ӗçсем тунӑ урнӑ йытӑсем. Çак вӑхӑтра ӗнтӗ Алексей Воробьевӑн, хӑйӗн юлташӗсемпе пӗрле, нимӗçсем каçса çӳрекен кӗпере тупса шӑлтермелле пулнӑ. Çивӗч разведчиксем çак задание чыслӑн пурнӑçланӑ. Нимӗçсем каçса çӳрекен кӗпере йӑлтах салатса тӑкнӑ. Кунашкал ӗçсем Воробьев юлташӑн темиçе хутчен те пулнӑ. Ахальтен мар ӗнтӗ ӑна правительство икӗ хутчен Отечественнӑй вӑрçӑ тата Хӗрлӗ Çӑлтӑр орденӗсемпе, «За боевые заслуги» медальпе наградӑланӑ.

1945 çулта мухтавлӑ Хӗрлӗ Çар тӑшманӑн йӑвине çитсе, Берлин хули çине Çӗнтерӳ ялавӗ çӗклерӗ. Берлин хулишӗн нимӗçсем хытӑ тӑчӗç. Гитлеровецсем пӗр пусӑм çӗре те хӑйсен ирӗкӗпе парахса хӑварасшӑн пулмарӗç. Урса кайсах тапаланчӗç вӗсем Берлин хулишӗн. Юлашки вӑйне кӑларса, вӗсем темиçе çӗршер танк вӑрçа кӗрте-кӗрте янӑ.

Анчах совет воинӗсен паттӑрлӑхне хурçӑ та, вут та—нимӗн те чӑтса тӑма пултарайман.

1945 çулхи çуркунне пирӗн земляк гварди старшини Алексей Воробьев Берлин патӗнчи Тельтов текен канал урлӑ пехотӑна каçарса тӑнӑ. Нимӗçсем Тельтов каналӗ тӑрӑхӗнче пур çӗрте те минӑсем лартса тухнӑ, йӗплӗ пралуксем карнӑ пулнӑ. Кунта вӗсем çирӗп оборона тытма шутланӑ. Пур енчен те вут-хӗм сапса тӑнӑ.

Пирӗн паттӑр воинсем çак плацдарма хастаррӑн штурмласа илнӗ.

Çав çапӑçура паттӑрлӑх кӑтартнӑшӑн СССР Верховнӑй Совечӗн Президиумӗ 1945 çулхи июнӗн 27-мӗшӗнче кӑларнӑ Указ тӑрӑх, Алексей Иванович Воробьев юлташа Совет Союзӗн Геройӗ ятне панӑ.

Çапла ӗнтӗ пирӗн земляк Алексей Воробьев, Берлин хулишӗн çапӑçса, герой ятне илнӗ.

Мухтавлӑ землякӑн вӑрçӑ çулӗ вӑрӑм. Вӑл, Мускав патӗнчен пуçласа, Дрезден, Берлин, Прага хулисем патне çитнӗ, вӗсем витӗр утса тухнӑ. Юлашки вӑхӑтра вӑл Чехословакин Прага хулинче пулнӑ.

Нумаях пулмасть Алексей Воробьев тӑван ялне курма таврӑнчӗ.

1945 çулхи майӑн 9-мӗшӗпе сентябрӗн 2-мӗш кунӗсем пирӗн çӗршыв историне нихçан манмалла мар кунсем пулса çырӑнса юлаççӗ. Çав кунсенче ӗнтӗ пирӗн çӗршыв Аслӑ çӗнтерӳ уявне ирттерчӗ.

Çак Аслӑ çӗнтерӳре чӑваш халӑхӗ те хӑйӗн паттӑр ывӑл-хӗрӗсемпе мухтанма тивӗçлӗ.

Алексей Воробьев пек паттӑр воинсем пирӗн республикӑра темиçе вуншарӑн шутланаççӗ.

Мухтав та чыс паттӑр землякене!

Ф. МАЛЫШКИН.

ПӖТӖМ СОЮЗРИ ӐМӐРТӐВА ПУÇАРСА ЯНӐ КОЛХОЗӐН ÇИТӖНӖВӖСЕМ

ВОРОНЕЖ, сентябрӗн 21-мӗшӗ. (ТАСС). Добринка районӗнчи Ленин ячӗпе тӑракан орденлӑ колхоз тырпул пухса кӗртес тӗлӗшпе Пӗтӗм Союзри социализмлӑ ӑмӑртӑва пуçарса янӑччӗ. Колхозниксем ун чухне тырпула ӑнӑçлӑн пухса кӗртме, сентябрӗн 25-мӗшӗ тӗлне государствӑна тырӑ парса татма, çав вӑхӑтрах кӗрхи тырӑсене акса пӗтерме сӑмах панӑччӗ. Хӑйӗн обязательствисене колхоз халь срокчен пурнӑçланӑ.

Мӗнпур тырра вырса, сыхса, капана хывса пӗтернӗ. Государствӑна тырӑ парса татнӑ. Кӗрхи тырӑсене 348 гектар вырӑнне 370 гектар акнӑ. Халь колхозниксем авӑн çапса пӗтереççӗ, кӗрхи сӗртме тӑваççӗ, выльӑх-чӗрлӗхе хӗл вӑхӑтӗнче ӑшӑ витесенче усраса лайӑх тӑрантарса пурӑнма хатӗрленеççӗ.

100 ÇУЛТИ КОЛХОЗНИЦӐН ÇЕМЬИ

Андижан облаçӗнчи Избаскент районӗнчи Сталин ячӗпе тӑракан ялхуçалӑх артелӗнчи колхозница Огуль-Биби Кульбатова 100 çул тултарчӗ. Вӑл хӑй ватти пӑхмасӑрах хӑйне çирӗп тыткалать, колхоз ӗçӗсемпе интересленет. Огуль-Бибие колхозниксем пурте юратса сума саваççӗ. Унӑн семьинче пӗтӗмпе 47 çын. Чи кӗçӗн внукӗ—6 çулта, аслӑ ывӑлӗ, агроном, çӗрмамӑк çитӗнтерекен паллӑ Ахматдин Кучкагов 70 çулта. Огуль-Бибин 15 внукӗ Отечественнӑй аслӑ вӑрçӑра пулнӑ. Вӗсенчен нумайӗшне Совет Союзӗн орденӗсемпе медалӗсене парса наградӑланӑ.

Халӗ Кульбатова семьи пысӑк уява хатӗрленет. Огуль-Бибин икӗ внукӗ демобилизаци йӗркипе киле таврӑнмалла. (ТАСС).

КАРЕЛИЕ МИНӐСЕНЧЕН ТАСАТСА ПӖТЕРЕÇÇӖ

ПЕТРОЗАВОДСК, сентябрӗн 21-мӗшӗ. (ТАСС). Карел-Финн республикине минӑсенчен тасатса пӗтереççӗ. Кӑçал осоавиахимовецсем 14.000 тӑваткӑл километр çӗре минӑсенчен тасатнӑ. 160.000 минӑна, авиабомбӑна тата снаряда тупса сиенсӗрлетнӗ.

РЕСПУБЛИКА ТĂРĂХ

Борисовпа Китаев—республикăри чи лайăх сунарçăсем

Отечественнăй вăрçă çулĕсенче пирĕн республикăри сунарçăсем Тăван çĕршыва мамăк тир парса тăрас тĕлĕшпе пысăк ĕçсем турĕç. Вĕсем хăйсен тылри патриотла ĕçĕпе фронтра паттăррăн кĕрешекен сталинла соколсене валли ăшă тумтирсем тума çĕршер мамăк тир парса тăчĕç.

Пирĕн республикăри сунарçăсем Ефим Борисов (Пăрачкав районĕ) тата Иван Китаев (Улатăр районĕ) 1944—45 çулти сезонра государствăна тискер кайăк тирĕ памалли задание 500-шер процента яхăн тултарнă.

Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăрту итогне пăхса тухса вĕсене Союзри «Заготживсырье» çумĕнчи сунарçăсен тата тир-сăран тăвакансен профсоюзĕн Центральный Комитечĕн Хисеплĕ кĕнеки çине çырса, Пĕтĕм Союзри иккĕмĕш преми пама йышăннă. Вĕсене кашнинех пăшал, атă çĕлетмелли материал тата Хисеплĕ грамотăсем панă.

Кунсăр пусне, государствăна тискер кайăк тирĕ памалли задание 2—3 хут ӳстерсе пурнăçланă сунарçăсене Улатăр районĕнчи Дмитрий Якимов, Иван Китаев, Никифор Оглоткин юлташсене тата Вăрнар районĕнчи Степан Анисимовпа Порфирий Алексеева тата ытти чылай сунарçăсене «Охотник-отличник» значокпа наградăланă.

Борисовпа Китаев сунарçăсем преми илнĕ ятпа 1945—46 çулти сезонра татах та лайăхрах ĕçлеме, государствăна нормăран 5—8 хут ирттерсе мамăк тир пама обязательство илчĕç.

С. СТЕПАНОВ.
Г. АБАИМОВ.

25 КИЛОГРАММ ПУРÇĂН КОКОНĔ

Ишлей районĕнчи Мамăш ял Советĕнчи «Коммунист» колхозра çулсеренех кĕман çулçипе пурăнакан пурçăн хуртне ĕрчетеççĕ. Кăçал кунта пурçăн тумалли кокона 25 килограмм пухса государствăна панă. Унщăн колхоза пурçăн тата ытти пусма таварсем параççĕ.

Пурçăн хуртне ĕрчетекен звенона Анисимова юлташ ертсе пырать.

8 СУРĂХРАН 18 ПУТЕК

Сĕнтĕр районĕнчи Ярославка ял Советĕнчи «Новое Чемеево» колхозра Отечественнăй аслă вăрçă инваличĕ В. Михайлăв юлташ иккĕмĕш çул ĕнтĕ ферма заведующийĕ пулса ĕçлет. Вăл хăйĕн ĕçне юратса, тимлĕн туса пырать. Унăн икĕ çулхи опычĕ çакна кăтартса парать: выранти сурăхсемех çулталăкра икĕ хут пăранлама пултараççĕ. Кунти сурăх фермичче 8 сурăха уйрăмăн пăхнă, вĕсем кашниех икĕ хут пăранланă. Малтанхи хут—январьпе февраль уйăхсенче, иккĕмĕш хут—июньпе июль уйăхĕсенче. Çапла вара кăçал 8 сурăх 18 путек туса панă, вĕсем пурте лайăх çитĕнеççĕ.

КОЛХОЗ ТЕАТРĔН ÇĔНĔ СПЕКТАКЛĔ

Калининăри колхоз театрĕ (Академиллĕ театрăн филиалĕ) Н. В. Гоголĕн «Авлану» ятлă комедине лартма хатĕрленме тытăннă. Ку спектакле Чăваш республикин искусствăсен тава тивĕçлĕ деятелĕ Н. С. Айзман лартать. Премьера октябрĕн пуçламĕшĕнче пулмалла, унтан вăл спектакле колхозсенче кăтартма тытăнаççĕ.

Пĕчĕк фельетон

Сармантейĕн сар чăххи...

Сармантейĕн сар чăххи сар çăмарта тунă, тет, ăна шăши пынă, тет те, хӳрипе çапса çĕмĕрнĕ, тет. Сармантейĕ те макăрать, тет, сар чăххи те какалать, тет.

Чăвашсен çак юмахла та шӳтле такмакне пурте астăваççĕ.

Анчах Октябрьски районри «Красный Корт» колхозра çавнашкал «истори» шӳтле мар, чăнласах пулса иртнĕ.

Ăна çаплараха такмакласа пама пулать пуль. Такмакĕ тикĕсех мар тухсан та, каçарăр.

«Корт» колхозăн чăххисем, Сармантейĕнни пек мар, пĕрре те мар, иккĕ мар, сарă çеç çăмартасем питĕ йышлă тунă, тет. Анчах такăш вĕсене, шăши те мар та чакак та мар, питĕ кăмăлланă, тет. Колхозниксем аптăраççĕ, тет, чăххисем те какалаççĕ, тет...

— Ула курак йăтмасть-ши?

— Чее чакак туртмасть-ши?

Колхозниксем, аптраса, шăтăксене питĕреççĕ, хуралăça хытăрах сыхламашкăн хушаççĕ. Акă хайхи пĕринче, ытти колхозниксем пурте уйра ĕçленĕ хушăра, Анна Ванюшина чăх-чĕп фермине йăпшăнса пынă. Унăн-кунăн пăхкаланă, анчах фермăна питĕрнĕ пулнă. Çăмарта туса тухакан чăхсем кăтиклени Ванюшинăна питĕ пылакăн илтĕнсе тăнă. Вăл, тӳсеймесĕр, чăх витин чӳречинчен пырса пăхнă. Шалта çăмарта ещĕкĕ курăнса кайнă.

— Ай, пӳлĕхçĕм,—тенĕ вăл, сĕлекине çăткаласа.—Ещĕк çывăх та ал çитмест.

Ванюшина вара, кукăр патак тупса, ещĕке чӳрече патнерех туртса илнĕ. Çăмартасене сăхман кĕсъисене, хĕве тултарнă. Çав вăхăтра хуралçă сиксе тухнă, анчах тиллĕн хӳри вăрăм та тытма çук—яка.

Колхозниксем çав ĕç çинчен колхоз председательне Х. Волков юлташа пĕлтереççĕ.

— Ванюшина ĕçе тухмасть, ĕçкунĕсен минимумне тултармасть!

— Ванюшина мăйăра кăна çӳрет!

— Мăйăра мар, çăмартана çӳрет!

Çапла тарăхса калаçаççĕ колхозниксем. Анчах часах вĕсем туйса илеççĕ: вĕсен председателĕ хăлхасăр пулнă! Илтмест вăл, нимĕн те илтмест!

— Мĕн пулнă апла?

— Ара, вăл Ванюшина патне ĕçке çӳрет те, таçта сивĕ сăра лекнĕ пуль?

— Сивĕ эрех тата хăрушăрах теççĕ.

— Сыватас пулать, пирĕн сыватакан органсем çук мар-çке!

Вăт çапла пулнă ку «истори»! Сармантейăн сар чăххи сар çăмарта тунă, тет, ăна ик уралла шăши пынă, тет те, вăрăм аллипе кап! çаклатса кайнă, тет. Сар чăххи те какалать, анчах Волков хăнт та тумасть.

Н. АНДРЕЕВ.

Лондонра Совет посольствинче Молотов юлташ ячĕпе пулса иртнĕ йышăну

ЛОНДОН, сентябрĕн 21-мĕшĕ. (ТАСС). Сентябрĕн 20-мĕшĕнче каçхине Совет Союзĕн Англири Посолĕ Ф. Т. Гусев арăмĕпе пĕрле Ют çĕршыв Ĕçĕсен Халăх Комиссарĕ В. М. Молотов ячĕпе апатлану туса ирттернĕ. Молотов юлташ хальхи вăхăтра Лондонра пурăнать, вăл унта Ют çĕршыв ĕçĕсен министрĕсен совечĕн ларăвĕсенче пулать.

Англи енчен апатланура çаксем пулнă: Великобритани премьер-министрĕ Клемент Эттли арăмĕпе пĕрле, Великобританин ют çĕршыв ĕçĕсен министрĕ Эрнест Бевин арăмĕпе пĕрле, ют çĕршыв ĕçĕсен министрĕн аслăхи заместителĕ сэр Александр Кадоган, Великобританин Совет Союзĕнчи Посолĕ сэр Арчибальд Кларк Керр.

Совет Союзĕ енчен çаксем пулнă: Совет Союзĕн Пĕрлешӳллĕ Штатсенчи Посолĕ А. А. Громыко, Совет Союзĕн Италири Посолĕ М. А. Костылев, К. В. Новиков, С. А. Голунский, К. Е. Зинченко, К. М. Кукин арăмĕпе пĕрле, В. Н. Павлов тата Г. Ф. Саксин.

Апатлану туслăн пулса иртнĕ.

ЮТ ÇĔРШЫВ ĔÇĔСЕН МИНИСТРĔСЕН СОВЕЧĔН ЛАРĂВĔ ÇИНЧЕН ПĔЛТЕРНИ

ЛОНДОН, сентябрĕн 20-мĕшĕ. (ТАСС). Сентябрĕн 20-мĕшĕнче каçхине ют çĕршыв ĕçĕсен министрĕсен совечĕн пĕлтерĕвне пичетлесе кăларнă. Унта çапла каланă:

«Сентябрĕн 20-мĕшĕнче ют çĕршыв ĕçĕсен министрĕсен совечĕ икĕ лару туса ирттернĕ. Ирхи ларура Китайăн ют çĕршыв ĕçĕсен министрĕ Ван Ши-цзе председатель пулнă. Кăнтăрла иртсен пулса иртнĕ ларура Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсен государство секретарĕ Бирнс председатель пулса ертсе пынă.

Икĕ ларăвĕнче те Финляндипе тата Румынипе тумалли мирлĕ договорсен пĕтĕмĕшле принципĕсене пăхнă. Сӳтсе явнă чухне Совет Союзĕн сĕнĕвĕсене тĕпе хунă. Çавăн пекех Англин делегацийĕ те çав икĕ договор пирки хăйĕн сĕнĕвĕсене тăратнă. Пĕрлешӳллĕ Штатсен делегацийĕ Румынипе тумалли договор пирки хăйĕн сĕнĕвĕсене тăратнă.

Советăн çитес ларăвĕ сентябрĕн 21-мĕшĕнче ирхине 11 сехетре пулмалла».

ЛОНДОН, сентябрĕн 21-мĕшĕ. (ТАСС). Ют çĕршыв ĕçĕсен министрĕсен совечĕ паян икĕ лару туса ирттернĕ. Ирхи ларура Францин ют çĕршыв ĕçĕсен министрĕ Бидо председатель пулнă. Кăнтăрла иртсен пухнă ларура Англин ют çĕршыв ĕçĕсен министрĕ Бевин председатель пулнă.

Ирхи ларура Румынипе тумалли мирлĕ договорăн проектне сӳтсе-явнă. Кăнтăрла иртсен пухнă ларура Болгарипе тумалли мирлĕ договорăн проектне сӳтсе-явнă. Çак проект çинчен калаçнă чухне СССР меморандумне тĕпе хунă, çав вăхăтрах тата акăлчансемпе америкăнецсен сĕнĕвĕсене те пăхса тухнă.

Ют çĕршыв ĕçĕсен министрĕсен совечĕн тепĕр ларăвĕ ыран ирхине 11 сехетре пулать.

СОЮЗНИКСЕН АВСТРИРИ СОВЕЧĔН ИККĔМĔШ ЛАРĂВĔ

ВЕНА, сентябрĕн 20-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен совечĕн иккĕмĕш ларăвĕ паян пулса иртнĕ. Ларура генерал Марк В. Кларк (США) председатель пулнă. Генерал Кларк, Совет Союзĕн Маршалĕ И. С. Конев (СССР), генерал-лейтенант Ричард Мак-Крири (Великобритани), генерал-лейтенант Эмиль Марие Бетуар (Франци) тата вĕсен заместителĕсем, политика советникĕсем, экспертсем политикăпа экономика ыйтăвĕсене сӳтсе явнă. Вĕсем çав ыйтусене пĕр-пĕрне ăнласа тата пĕр-пĕринпе килĕштерсе ĕçлес тесе тăрăшса сӳтсе-явнă.

Реннер доктор сентябрĕн 24-мĕшĕнче провинцисен конференцине пухма сĕннине Союзниксен совечĕ йышăннă. Австрие оккупациленĕ державăсем пурте делегатсене Венăна çитме пулăшмалла, тесе калаçса татăлнă.

Союзниксен совечĕ тата çак ыйтусем тĕлĕшпе калаçса татăлнă: Австри тăрăх пĕр чăрмавсăр çӳреме май паракан ĕçсене пурнăçласси çинчен, почта, телеграф тата телефон çыхăнăвĕ тепĕр хут хута ярасси çинчен тата çĕркăмрăкĕн сахал запасĕнчен Австрие хĕл касма ытларах çĕркăмрăкĕ парасси çинчен калаçса татăлнă.

ПОЛЯК САЛТАКĔ СОВЕТ СОЮЗĔН АНГЛИРИ ПОСОЛĔ ГУСЕВ ЮЛТАШ ПАТНЕ ЯНĂ ÇЫРУ

ЛОНДОН, сентябрĕн 19-мĕшĕ. (ТАСС). Совет Союзĕн Англири посолĕ Гусев юлташ пĕр Резницкий ятлă полякран çыру илнĕ. Çав поляк поляксен Купаре тĕрминче (Шотландири Файф графствинче) ларать. Çырăва сентябрĕн 10-мĕшĕнче çырнă пулнă. Унта поляксен эмиграцири ушкăнĕн ирсĕрлĕхĕсем çинчен каласа панă.

«Сирĕнтен эпĕ,—тенĕ çырура,—поляксен салтакĕсене пулăшу пама ыйтатăп. Вĕсене Лондонри поляк офицерĕсем çав тери асаплантарса тытса усраççĕ. Ун çинчен пурне те çырура каласа пама май та çук, анчах эсир мана ĕненĕр: Германипе Японин тыткăнри салтакĕсене те союзниксем лайăхрах тытса усраççĕ пулмалла. Эпир—чăн-чăн Польша патриочĕсем—çав урнă йытăсенчен нимĕнле майпа та хӳтĕленме пултараймастпăр. Кувта мĕн пулса иртни çинчен эпĕ сире темиçе факт çеç кăтартса парасшăн. Лагерь палачĕ пулса Самецкий майор ĕçлет. Лагерьти кашни çыннах хăйпа çап-çара хырса яраççĕ, хырнă чухне вара нумайĕшне хĕнеççĕ, сăнчăрпа çыхса лартаççĕ. Иртнĕ эрнере пĕр моряка çулталăк çурă хушши тĕрмере хупса усрамалла суд тунă, тепĕр еврее, Бразилирен хăй ирĕкĕпе килсе Польша çарне кĕнĕскере, 6 уйăх хупса усрамалла суд тунă. Вĕсен пĕртен-пĕр преступленийĕ те ĕнтĕ вĕсем киле таврăнасшăн пулни тата ирĕкре пурăнма кăмăл туни çеç пулнă. Пĕр-пĕр салтак хăйĕн Польшăна таврăнас кăмăл пуррине каласа парсанах, ăна пысăк преступник вырăнне хурса тĕрмене хупса лартаççĕ.

Юлашкинчен çыру авторĕ «Лондонри поляксен ушкăнĕн ирсĕр ĕçне пĕтерсе лартма кирлĕ», тесе çырать.

СОВЕТ ÇАРĔСЕНЕ ТЕГЕРАНРАН ИЛСЕ ТУХНИ

ТЕГЕРАН, сентябрĕн 20-мĕшĕ. (ТАСС). Демобилизаци пуçланнă май сентябрĕн 19-мĕшĕнче Тегеран хулинчен Хĕрлĕ Çар чаçĕсене пурне те илсе тухнă.

СУН ЦЗЫ-ВЕНЬ ПАРИЖРАН КАЙНĂ

ПАРИЖ, сентябрĕн 21-мĕшĕ. (ТАСС). Франс Пресс агентстви çапла пĕлтерет: Китай премьер-министрĕ Сун Цзы-вень ĕнер Парижран Китая тухса кайнă.

Америкăпа Совет Союзĕ хушшинчи туслăх совечĕн директорĕ Совет Союзĕ çинчен каласа пани

НЬЮ-ЙОРК, сентябрĕн 21-мĕшĕ. (ТАСС). Америкăпа Совет Союзĕ хушшинчи туслăх совечĕн директорĕ Смит Совет Союзĕ тăрăх икĕ уйăх хушши çӳренĕ хыççăн Нью-Йорка таврăннă. Çавна май вăл йышăну туса ирттернĕ. Йышăнура вăл çапла каланă: Совет Союзĕн тĕп тĕллевĕ—Пĕтĕм тĕнчере мирлĕ пурнăç тата хăрушсăрлăх туса хурас тĕлĕшпе активлăн ĕçлесси пулса тăрать. Смит тата çакăн çинчен пĕлтернĕ: Совет халăхĕ Америкăри пурнăçăн пур енĕсемпе те хытă интересленсе пырать, тенĕ.

Смит уйрăмах çакăн çинчен палăртса каланă: Совет Союзĕнче театр, опера тата балет искусствисем хытă вăйланса пыраççĕ, тенĕ.

США-ри ЗАБАСТОВКĂСЕМ

НЬЮ-ЙОРК, сентябрĕн 21-мĕшĕ. (ТАСС). Пĕрлешӳллĕ Штатсенче забастовкăсем йышлăланса пыраççĕ. Хальхи вăхăтра 215.000 рабочие яхăн забастовка тунă, вĕсенчен 84.000 рабочи Детройт хулинче ĕçлеме пăрахнă. Юнайтед пресс агентстви пĕлтернĕ тăрăх, правительство членĕсем кăçал кĕркунне рабочисемпе предпринимательсем хушшинче пысăк хирĕçӳ тухса каясран хăраççĕ.

Детройтри хаçатсем пĕлтернĕ тăрăх, Форд фирми 50.000 рабочие ĕçрен кăларса яни автомобиль промышленноçĕнчи рабочисен профсоюзне хирĕç кĕрешме малтанах шухăшласа хунă ĕç пулса тăрать. Автомобильсем тăвакан Дженерал Моторс компанийĕн предприятийĕсенче ĕçлекен рабочисен профсоюзĕн руководителĕсем чи малтан ĕçукçине хăпартма ыйтнă. Çак компани завочĕсенче 325.000 рабочи ĕçлет.

Юнайтед пресс агентстви çапла пĕлтерет: автомобиль промышленноçĕнчи рабочисен профсоюзĕн руководителĕсем хальхи вăхăтра çак ыйтăва сӳтсе-яваççĕ: автомобиль промышленноçĕн виçĕ пысăк хуçи — Форд, Крейслер тата Дженерал Мотор (вĕсен завочĕсенче миллион рабочи ытла ĕçлет) ĕç укçине хăпартма килĕшмесен, вĕсен мĕнпур завочĕсенче забастовка тумалла, теççĕ.

«Дейли уоркер» хаçат çапла калать: автомобиль тăвакан компанисен руководителĕсемпе автомобиль тăвакан рабочисен профсоюзĕ çитес икĕ уйăх хушшинче татăклă ĕçсем тума хатĕрленеççĕ. Автомобильсем тăвакан çав чи пысăк виçĕ компании руководителĕсем нумаях пулмасть вăрттăн канашлу туса илнĕ. Унта вĕсем профсоюз ĕçукçине хăпартма ыйтнине сирсе яма йышăннă. Профсоюз забастовка тăвасси çинчен пĕлтерсен, канашлăвăн çав решенийĕ çинчен çак эрнере кашни компани хăй каласа парĕ.

«Джорнал оф коммерс» хаçат çапла калать: автомобиль промышленноçĕнчи рабочисем ĕç укçине хăпартма ыйтни рабочисемпе промышленниксене хирĕçтерсе ярать.

АМЕРИКА СЕНАЧĔ ĔÇСĔР ТĂРСА ЮЛНĂ ÇЫНСЕНЕ ПАМАЛЛИ ПОСОБИЕ ӲСТЕРЕССИ ÇИНЧЕН КАЛАКАН ЗАКОНА ЙЫШĂНМАН

ВАШИНГТОН, сентябрĕн 21-мĕшĕ. (ТАСС). Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсен сеначĕ ĕçсĕр тăрса юлнă çынсене памалли пособие ӳстересси çинчен калакан законăн проектне пăхса тухнă. Сенат çав проекта йышăнман. Ăна хирĕç 51 сенатор сасăланă, проектшăн 23 сасă пулнă. Çапла вара ĕçсĕр тăрса юлнă çынсене пулăшу парас тĕлĕшпе хальхи йĕркех юлать. Çав йĕрке тăрăх, ĕçсĕр тăрса юлнă çынсене пулăшу мĕн чухлĕ парассине кашни штат хăй туса пырать.

АМЕРИКА КОРРЕСПОНДЕНЧĔ ПАЛЛА ГИТЛЕРОВЕЦСЕНЕ ТЫТСА ХУПНИ ÇИНЧЕН

НЬЮ-ЙОРК, сентябрĕн 21-мĕшĕ. (ТАСС). Ассошиэйтед пресс агентстви çапла пĕлтерет: Нюрнберг хулинче тĕрмене хупнă гитлеровецсемсĕр пуçне, америкăнецсемпе акăлчансен йĕрлесе тĕпчекен бюровĕнче Франкфурт çывăхĕнче 225 паллă гитлеровеца хупнă. Акăлчансен аллине Тиссен, Шахт тата ытти промышленниксем, финансистсем, инженерсем лекнĕ, америкăнецсен аллине Кессельринг, Мейснер, Кальтенбруннер тата ыттисем те лекнĕ.

ГИТЛЕРОВЕЦСЕН БЕЛЬЗЕНРИ КОНЦЕНТРАЦИЛЛĔ ЛАГЕРĔНЧИ ПУÇКАСАКАНСЕНЕ СУД ТУНИ

ЛЮНЕБУРГ, сентябрĕн 21-мĕшĕ. (ТАСС). Люнебургри судăн тăваттăмĕш ларăвĕнче Бельзенри концентрациллĕ лагерьте 1945 çулхи апрель уйăхĕнче мĕн пулни çинчен калакан документлă фильма кăтартнă. Англи çарĕсем лагере пынă вăхăтра Бельзенра çын виллисем туптуллиех пулнă. Нумай виллесен ӳтне касса илни экран çинче лайăхах курăнать. Лагерьте эсэсовецсем хуçаланнă юлашки кунсенче — çав лагере хупнă çынсем, выçăхса çитнĕскерсем, час-часах пĕр-пĕрне çинĕ. Фильма пăхса тухнă хыççăн судра Англи учителĕ Друллинец свидетель пулса çапла каланă: çынна çын çинине эпĕ хам курнă, тенĕ.

ЭЙЗЕНХАУЗРА 1-мĕш КЛАСС ГРЮНВАЛЬД ХĔРЕСĔПЕ НАГРАДĂЛАНИ

ВАРШАВА, сентябрĕн 21-мĕшĕ. (ТАСС). Варшаври радио пĕлтернĕ тăрăх, сентябрĕн 21-мĕшĕнче Варшавăна Эйзенхауэр генерал пынă. Вăл пынă ятпа йышăну туса ирттернĕ. Йышăнура Польша Халăх Совечĕн Президенчĕ Берут Эйзенхауэр генерала Польшăн чи аслă орденне—1-мĕш класс Грюнвальд хĕресне панă.

ШУБАШИЧ ĔÇĔСЕНЕ ТУСА ТĂМА ТИТО МАРШАЛ ЙЫШĂННĂ

БЕЛГРАД, сентябрĕн 18-мĕшĕ. (ТАСС). Белградри радио пĕлтернĕ тăрăх, Югослави регенчĕсем указ кăларнă. Указра çапла каланă: Югославин ют çĕршыв ĕçĕсен министрĕ Иван Шубашич доктор сывă мар пулнă пирки, ют çĕршыв ĕçĕсен министрĕн ĕçĕсене туса тăма министрсен совечĕн председательне оборона министрне Иосип Броз Тито маршала хушас, тенĕ.

СОВЕТ ÇАМРĂКĔСЕН ДЕЛЕГАЦИЙĔ ЛОНДОНА ПЫНĂ

ЛОНДОН, сентябрĕн 21-мĕшĕ. (ТАСС). Паян Лондона Совет çамрăкĕсен делегацийĕ çитнĕ. Делегацие Михайлов ертсе пырать. Делегаци членĕсем çаксем: Иванов, Пушков, Шевцов тата Чечеткина. Лондонра çамрăксен Пĕтĕм тĕнчери конференцине пухас тĕлĕшпе ĕçлекен комитет туса хунă. Михайлов ертсе пыракан делегаци çав комитетра ĕçлеме пырĕ. Комитетăн малтанхи ларăвĕ сентябрĕн 23-мĕшĕнче пулмалла.

АНГЛИ, ФРАНЦИ ТАТА АМЕРИКĂРИ ПĔРЛЕШӲЛЛĔ ШТАТСЕМ ВИÇÇĔШĔ ПĔРЛЕ ГРЕЦИРИ СУЙЛАВСЕМ ÇИНЧЕН КАЛАНИ

ЛОНДОН, сентябрĕн 19-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви çапла пĕлтерет: Англипе Франци тата Пĕрлешӳллĕ Штатсем виççĕшĕ те пĕрле Грецири суйлавсем пирки заявлени пичетлесе кăларнă. Çав виçĕ государство Греци правительствине Грецири пĕтĕмĕшле суйлавсене монархи пирки пулмалли плебисцита тăвиччен ирттерме сĕннĕ.

ЛАВАЛЕ ДОПРОС ТУНИ

БРАЗЗАВИЛЬ, сентябрĕн 21-мĕшĕ. (ТАСС). Браззавиль хулинчи радио çапла пĕлтерет: Виши правительствин пуçлăхĕ пулнă Лавале допрос тунă. Допросра Лавальтен вăл 1942 çулхи ноябрь уйăхĕнче Гамбургра Германи суту-илӳ флочĕн командующийĕпе Кауфманпа тунă килĕшӳ çинчен ыйтса пĕлнĕ. Çав килĕшӳ тăрăх, Лаваль Германие Францин Вăтаçĕр тинĕс çинчи 650 пин тонна тиякан суту-илӳ флотне панă.

Тĕнчери лару-тăру

Ют çĕршыври хаçатсенче пуринчен ытларах халĕ Ют çĕршыв ĕçĕсен министрĕсен совечĕн Лондонри канашлăвĕ çинчен çыраççĕ.

Хальхи вăхăтра совет Италипе, Финляндипе тата Румынипе тумалли мирлĕ договорсен проекчĕсене хатĕрлеççĕ. Ют çĕршывсенчи реакциллĕ хаçатсем министрсен совечĕн ĕçĕнчи йывăрлăхсене союзниксем хушшинчи килĕшменлĕх пек туса кăтартма тăрăшаççĕ, çакна май вара Совет Союзĕ çинчен тĕрлĕ элексем сараççĕ. Çав вăхăтрах Англири хаçатсем канашлăва пухăннă министрсем пурте Крымри тата Берлинри конференцисенче йышăннисене пăхăнса пыраççĕ пулсан, министрсен совечĕн ĕçĕ ăнăçлă пулма пултарать, тесе çирĕплетсех калаççĕ.

Ют çĕршыв хаçачĕсенче В. М. Молотов юлташ Лондонри Совет посольствинче пулса иртнĕ прес-конференцире тухса калани çинчен нумай çыраççĕ. Хаçатсенче кăтартса панă тăрăх, В. М. Молотов пресс-конференцире тухса калани вăл—аслă державăсен Лондонри канашлăвĕнче сӳтсе-явма палăртнă ыйтусем çине Совет Союзĕ çирĕп пăхнине кăтартса парать. Тата çакна палăртмалла: Совет Союзĕн çак позицийĕ мĕнпур çĕршывсенчи демократи ĕçне хӳтĕлет, вăл аслă державăсем ку таранччен йышăннă ытти решенисенчен тухса тăрать.

* * *

Балканри тата Европăн кăнтăр-хĕвелтухăçĕнчи демократиллĕ çĕршывсенче халĕ питĕ паллă ĕçсем пулса иртеççĕ. Югославире, Венгрире, Болгарире тата Румынире çитес çывăх вăхăтрах парламент депутачĕсене суйламалла.

Болгарире суйлавсем ноябрĕн 18-мĕшĕнче пулса иртеççĕ. Болгарири тата Болгари тулашĕнчи реакциллĕ ушкăнсен элек саракан кампанийĕсем темĕн те пĕр калаççĕ пулсан та, Болгарире çакăн пек демократиллĕ суйлавсем ку таранччен нихăçан та пулманни пуриншĕн те паллă. Болгарири отечественнăй фронт правительстви кăçалхи июлĕн пуçламăшĕнче йышăннă çĕнĕ суйлав законĕ 19 çула çитнĕ Болгарири пур граждансене те—арçынсемпе хĕрарăмсене—суйлав прави парать. Фашистла ĕçсем тунăшăн судпа айăпланнă тата гражданправисене çухатнă çынсен çеç суйлав прави çук. Çĕршыв историйĕнче çамрăксемпе хĕрарăмсем тата çар çыннисем суйлава чи малтанхи хут хутшăнаççĕ. Мĕнле тĕне ĕненнине тата мĕнле нации çынни пулнине пăхмасăрах, пурте суйлама та, суйланма та пултараççĕ. Парламент депутатне суйламалли кандидата, демократиллĕ политикăллă партисемпе пĕрлех, суйлавçăсен уйрăм ушкăнĕсем те тăратма пултараççĕ. Çĕршывра суйлав умĕнхи хĕрӳллĕ кĕрешӳ пуçланса кайнă. Çав кĕрешӳ пынă май, оппозици представителĕсем, ирĕклĕх условийĕсемпе усă курса, хăйсен партийĕсене тăваççĕ, хăйсен хаçачĕсене кăлараççĕ. Отечественнăй фронта кĕрекен политикăллă тăватă партин пуринчен ытларах кандидатсем тăратнă. Суйлавра çав партисен кандидатсен пĕр списокĕ пулать, пĕр платформа пулать. Çав суйлав платформинче Болгари халăхĕн тĕп интересĕсем çинчен каласа панă. Тулашри политика çинчен илсен, Балканра тата пĕтĕм тĕнчипе çирĕп мир тăвасси пулать. Çавна май Болгари Пĕрлешнĕ нацисен уставне йышăнса ырларĕ. Болгарие ирĕке кăларакан совет халăхĕпе туслă пурăнма тытăнчĕ. Мĕнпур демократиллĕ çĕршывсенчи халăхсемпе туслă пурăнассине çирĕплетсе пыма пуçларĕ. Платформăра çавăн пекех тата рассăллă тата фашистла идеологие хирĕç кĕрешме, çăмах ирĕклĕхне пама, халăха пухусемпе организацисем тума ирĕк пама, çĕршыв экономикине хăвăртрах юсаса ура çине тăратма палăртнă.

Çак демократиллĕ платформăна мĕнпур Болгари халăхĕ йышăнса ырласси çинчен нимĕн иккĕленмелли те çук. Çавăнпа та ĕнтĕ Болгари рекацийĕ отечественнăй фронтăн демократиллĕ платформине тата унăн кандидачĕсене çав тери хаяррăн хирĕç тăрать.

Демократиллĕ Югославире те учредительнăй пухăва (скупщинăна) суйлас вăхăт нумаях юлмарĕ. Премьер-министр тата халăх фрончĕн председателĕ Тито маршал пĕлтернĕ тăрăх, Югославире суйлавсем ноябрĕн 11-мĕшĕнче пулса иртмелле. Югославин вăхăтлăх халăх скупщинин нумаях пулмасть пулса иртнĕ сессийĕ çĕнĕ суйлав законĕ йышăннă. Çав закон тăрăх, Югославири халăхăн сарлака массисем малтанхи хут суйлава хутшăнма пултараççĕ.

Çĕнĕ Югославин тăшманĕсем Югославири суйлавсене пăсма тăрăшаççĕ. Вĕсем калапă тăрăх, Югослави халăхĕн 60 процентне суйлав прави паман пулать. Анчах çав вăхăтрах Югославири çĕнĕ суйлав законĕ суйлавçăсен хисепне виçĕ хут ӳстерни курăнать. Болгарири пекех, Югославири суйлав законĕ тăрăх та 18 çула çитнĕ пур граждансем те—хĕрарăмсем, çамрăксем, çар çыннисем—суйлама та, суйланма та пултараççĕ. Çĕршыва сутнă çынсен, оккупантсене пулăшнă çынсен çеç суйлав прави çук. Çĕршыври мĕнпур демократиллĕ партисемпе организацисене пĕрлештерсе тăракан Югославири халăх фрончĕ пулас суйлавра пĕр список тăратать. Оппозици представителĕсем хăйсен кандидачĕсене тăратма пултараççĕ.

Халăх фрончĕн исполкомĕ нумаях пулмасть суйлав умĕн чĕнсе каланине пичетлесе кăларнă. Çав чĕнсе каланинче суйлавçăсене Югославири демократиллĕ федерациллĕ республикăшăн, Югославири пĕртан правалла халăхсен тăванлăхĕпе пĕрлĕхĕшĕн кĕрешме чĕннĕ. Халăх фронтне кĕрекен демократиллĕ партисем Югослави халăхне халăх фрончĕн суйлав программине йышăнса унăн кандидачĕсемшĕн сасăлама чĕнсе каланă.

Венгрири вăхăтлăх нации пухăвĕ нумаях пулмасть çĕнĕ суйлав законне çирĕплетнĕ. Венгрире те çитес çывăх вăхăтрах парламента («нации пухăвне») суйламалла.

Венгрири суйлав законĕсенче кăтартнă тăрăх, 20 çула çитнĕ Венгри гражданĕсем пурте суйлама та, суйланма та пултараççĕ. Политикăпа çар преступникĕсене кăна суйлава хутшăнтармаççĕ.

Çĕршывра суйлав умĕнхи кампани питĕ вăйлăн сарăлса кайнă. Будапештри профсоюз членĕсен суйлав умĕнхи пухăвĕнче çапла палăртнă: Венгрире çакăн пек демократиллĕ суйлав законĕ нихăçан та пулман. Профсоюз членĕсене пухху суйлава активлăн хутшăнма чĕннĕ.

Румынире те çитес çывăх вăхăтрах суйлавсем пулса иртмелле. Халĕ мĕнпур çĕршывĕпе пулса иртекен пухусемпе митингсенче Румыни халăхĕ Петре Гроза доктор ертсе пыракан демократиллĕ правительствăна ырлаççĕ. Петре Гроза правительстви кĕске вăхăтрах мĕнпур халăха пĕтĕçтерме тата çĕршыв умĕнче тăракан экономикăллă задачăсене пурнăçа кĕртме пултарчĕ. Савăнпа пĕрлех пухусемпе митингсенче Румынири Маниупа Радеску лагерĕнчи реакционерсене питлеççĕ. Реакционерсем Румынире хăрушă пуçласа яма тата ăна демократиллĕ султан пăрса яма тăрăшаççĕ.

Болгарире, Венгрире тата Румынире чăн-чăн демократиллĕ суйлавсене ирттерме çак çăлтавсем пулăшрĕç: çав çĕршывсенче демократиллĕ правительствăсем туса хунă, вĕсем демократи çулĕ çине тăнă, унта фашистсемпе су тăнчăксене хирĕç кĕрешсе пыраççĕ, демократиллĕ çĕршывсен пĕрлĕхлĕ çемьине, Пĕрлешнĕ нацисен çемьине кĕме тăрăшаççĕ.

Çав çĕршывсенчи суйлав законĕсен çакăн пек уйрăмлăхсем пур: вĕсем демократи çĕнтерĕвĕсене çирĕплетеççĕ, политикăллă пурнăçа халăхăн сарлака массине хутшăнтараççĕ, пулас парламентсене фашистсемпе çар преступникĕсем лекессинчен хӳтĕлеççĕ.

Çавăн пирки те ĕнтĕ пулас суйлавсенче демократиллĕ правительствăсене хирĕç Болгарире—«геметовецсем», Югославире—Мачек йышши реакционерсем, Румынире—Маниупа Братиану тата Радеску йышши реакционерсемпе фашистла çынсем çав тери хаяррăн хирĕç тăраççĕ. Демократиллĕ парламент тата демократи çирĕпленсе пыни реакцие тĕппипех пĕтерсе лартма пултарнине вĕсем витĕрех курса тăраççĕ.

Болгарире, Югославире, Венгрире тата Румынире пулас демократиллĕ суйлавсемпе пĕр вăхăтрах Грецири монархистла-фашистла элементсем тата хальхи вăхăтри Греци правительстви малтан король çинчен «плебисцит», унтан суйлавсем туса ирттерме хăтланни питĕ тĕлĕнтерет. Çĕршыври пĕтĕм халăха, тата демократсемпе республиканецсен мĕнпур партийĕсемпе организацийĕсене çав тери тискеррĕн хĕсĕрленĕ вăхăтра çавăн пек «плебисципа» «суйлавсем», Грецири либералсен лидерĕ Софулис каланă тăрăх, ултав çеç пулса тăраççĕ. «Либераллă парти, — тесе каланă Софулис,—çавăн пек плебисципа суйлавсене бойкот тăвать».

Грецири демократсемпе республиканецсен ытти партийĕсемпе организацийĕсем те Греци реакцийĕн ĕçне çавăн пекех хытă питлеççĕ.

А. ШАТИЛОВ.

Ответлă редактор заместителĕ Н. С. СТЕПАНОВ.

Стенографипе машинопись курсĕ вĕренме илет. Курсра октябрĕн 5-мĕшĕнче вĕрентме пуçлаççĕ. Çак адреспа ыйтса пĕлмелле: гор. Чебоксары, Новая улица, 22.

Шупашкарта тарантас кӳлнĕ хура ăйăр çухалнă. Паллисем çаксем: çамки çинче пӳрне пусмаллăх шурă пăнчă пур, çилхи сылтăмалла. 4 çулта. Пĕлекенсене Кӳкесри «Трактор» колхозăн правленипе пĕлтерме ыйтатпăр.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати, ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн—0-67, заместителĕн—2-89, секретариатăн—4-.., пропаганда пайĕн—2-89, парти пурнăç пайĕн—3-99, промышленность пайĕн — 3-97, ялхуçалăх пайĕн—3-99, рабселькорсен пайĕн—0-67, издательство конторин — 0-23.

НТ 00410 Типография № 1 Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР. Заказ № 2, ф. о. .. 42 п. л. Тираж 16.000 экз